**Саламлатпăр**

Пирĕн юратнă пĕрремĕш учителе – Чуманкасси вăтам шкулĕнче пуçламăш классене вĕрентекен **Тамара Алексеевна ПАВЛОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Çирĕп сывлăх, нихçан та иксĕлми телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр сире. Çăмăл мар та пархатарлă ĕçре ăнăçу пултăр, шкул ачисем те, коллектив та сире яланах хисеплеччĕр. Пире пĕлӳ тĕнчинчи малтанхи утăмсене шанчăклăн пусма пулăшнăшăн, кирек хăш вăхăтра та тимлĕх уйăрнăшăн сире чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Эсир – чăн-чăн учитель. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕсем: сирĕн пĕрремĕш тата 2004 çулти выпускниксем.**

Юратнă аппана – Апчар ялĕнче пурăнакан **Надежда Анатольевна ЛЕДЕНЦОВĂНА** майăн 17-мĕшĕнче 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.



Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Халăх хушшинчи ырă яту нихăçан та ан иксĕлтĕр. Сывăх çыннусен юратăвĕ ялан телей те савăнăç кӳтĕр сана. Сĕтелу çăкăр-тăварпа, кĕрекӳ хисеплĕ те юратнă тăванусемпе тулли пултăр.

**Салампа: шăллĕпе йăмăкĕ çемйисемпе.**

Юратнă мăшăра, шăллăма, кукκана – Йӳтĕркасси ялĕнче пурăнакан **Юрий Тимофеевич МАТВЕЕВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.



Сывăх çынсемпе пĕрле савăнса пурăнма, килекен кашни куна хаваспа кĕтсе илме çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, тулли телей сунатпăр. Эсĕ вăхăтра çар тивĕçне Совет çарĕсен Германири ушкăнĕнче тата Чернобыльти радиаци аварине сирме хутшăнса хăвăн сывлăхна шеллемерĕн. Сана эпир татах тепĕр хут тав тăватпăр. Санăн умра яланах çутă та ырă кунсем пулччăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, икĕ аппăшĕ тата вĕсен ачисем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнă аттепе аннене, кукаçипе кукамине, тăванăмсене Тури Панкли ялĕнче пурăнакан – **АНАНЬЕВСЕНЕ: Геннадий Егоровича** 60 çулхи юбилейĕпе, **Галина Васильевнăна** çуралнă кунĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, тулăх пурнăç, вăрăм ĕмĕр, хастарлăхпа ăнăçу сунатпăр. Сирĕн пурнăç сукамакĕ таса та çутă, такăр пултăр. Килекен кашни кун телейпе савăнăç кӳтĕр. Эсир пурри – пирĕн пуянлăх. Ырă кăмăлăршăн, йывăр вăхăтра ăнланнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Иксĕре те канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, Даша мăнукĕ тата сывăх тăванĕсем.**

**Çанталăк**

## Пушартан сыхланăр

Чăвашри тавралăх гидрометеорологи центрĕ пĕлтернĕ тăрăх, çу уйăхĕн 17-мĕшĕччен хи тапхăрта республикăра уйрăмах шăрăх çанталăк тăрĕ. Сывлăшăн талăкри вăтам температури климат нормиччен 7 е ытларах та градус пысăк пулĕ. Çавăнпа та гражданcене кăвайт чĕртсесрен, çӳп-çап çунтарасран çирĕп тытăнса тăма ыйтатпăр.

**А. СОРОКИН, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

**Майăн 15-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ**

# Çемьесене тĕрлĕ пулăшупа тивĕçтереççĕ

***Хальхи вăхăтра çемьесене, вăл шутра пĕчĕк тупăшлисене, ача пур çемьесене е нумай ачаллисене, патшалăх енчен тĕрлĕ пулăшупа тивĕçтереççĕ. Пулăшу мерисем пирки Чăваш Ен Ĕç министерствин «Центр предоставления мер социальной поддержки» учрежденин Муркаш районĕнчи социаллă хӳтлĕх пайĕнче каласа пачĕç.***

Пĕчĕк тупăшлă çемьесене коммуналлă услугăсемшĕн тӳлекен укçа сумми çемьен пĕтĕмĕшле тупăшĕн 22 процентĕнчен иртет пулсан, коммуналлă услугăсен тӳлевĕшĕн субсиди параççĕ.

Адреслă пулăшăвăн тепĕр меслечĕ – социаллă контракт. Ачасене пĕр ашшĕамăшĕ кăна ӳстерекен çемьесене, тăвата е ытларах ачаллă çемьесене, ачасăр инвалид мăшăрсене, ача ӳстерекен çул çитмен çамрăка, çемьере икĕ ашшĕ-амăшĕ те (пĕччен ӳстерет пулсан – пĕр ашшĕамăшĕ) инвалидсем тата вĕсен çул çитмен ачисем пулсан, социаллă контракт килĕшĕвне тунă хыççăн вĕсене 6 уйăх таран уйăхсерен 10 пин те 361 тенкĕпе танлашакан тӳлевпе тивĕçтереççĕ.

Ачаллă çемьесем çине куçар. Çак çемьесене юлашки çулсенче тĕрлĕ социаллă тӳлев пама тытăнчĕç.

Çемьере пĕрремĕш ача çуралнăранпа вăл 3 çул тултариччен уйăхсерен паракан тӳлев пур. Вăл ачасен регионти пурăнмалли минимумĕпе танлашать. Вăл Чăваш Енре халĕ 9883 тенкĕ. Тӳлевпе çемьери пĕр çыннăн вăтам тупăшĕ пурăнмалли минимумăн икĕ хут пысăкрах суммиччен иртмесен тивĕçтереççĕ.

Çемьере виççĕмĕш е хыççăнхи ача çуралнăшăн та вăл 3 çула çитиччен тӳлев парассине пăхса хунă. Ку тӳлеве те çемьери пĕр çын пуçне тивекен вăтам тупăш пурăнмалли минимумăн икĕ хут пысăкрах суммиччен иртмесен параççĕ. Тӳлев 9883 тенкĕпе танлашать.

Çемьери 3 – 7 çулчченхи кашни ачашăн паракан тӳлев пирки. Çак тӳлеве çемьере



пĕр çын пуçне тивекен вăтам тупăш регионти пурăнмалли минимума çитмесен тата çемьен пурлăхне тишкернĕ хыççăн çирĕплетсе параççĕ. Пособин база виçи ачасен регионти пурăнмалли минимумăн çуррине, 50 проценчĕне, танлашать. База виçипе пособи парсан та çемьен кашни çын пуçне тивекен вăтам тупăшĕ регионти пурăнмалли минимумран иртмест пулсан, пособие ачан пурăнмалли минимумĕн 75 проценчĕ чухлĕ шутласа параççĕ. Иккĕмĕш мелпе те çемьен кашни çын пуçне тивекен вăтам тупăшĕ регионти пурăнмалли минимумран иртмесен, пособие ачан пурăнмалли минимумĕн 100 проценчĕпе танлаштараççĕ. Ку вăл 9883 тенкĕ пулать.

Кунсăр пуçне ача-пăча пособийĕ пур. Ăна ачаллă çемьере миçе ача пулнине, çемье сахал тупăшлине кура палăртаççĕ. Шкулсемпе ача сачĕсенче вара нумай ачаллă çемьесенче, сахал тупăшлă çемьесенче тата ытти категорие кĕрекен çемьесенче ӳсекен ачасем валли çăмăллăхсем пăхса хунă.

Амăш (çемье) капиталне парасси те ырă йăла пулса тăчĕ. Пĕлтĕртенпе ăна пĕрремĕш ача çуралнă хыççăнах пама тытăнчĕç. Кăçал капитал сумми 483 пин те 881 тенкĕпе танлашать. Иккĕмĕш ача çуралнă хыççăн çемьене амăш капиталĕн иккĕмĕш пайĕпе – 150 пин тенкĕпе – тивĕçтереççĕ.

Чăваш Енре çемьере виççĕмĕш ачашăн паракан республика капиталĕ те пур. Вăл 150 пин тенкĕпе танлашать.

Çамрăк çемьесене пурăнмалли çуртйĕр условийĕсене лайăхлатма каялла тавăрса памалла мар субсидипе тивĕçтерни те, хальхи вăхăтра виçĕ е ытларах ачаллă çемьесене ипотека кредитне саплаштарма 450 пин тенкĕ уйăрса пани те – питĕ пысăк пулăшу.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**«Наци проекчĕсем – Муркаш районĕнче»**

# Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче юсав ĕçĕсем пуçланчĕç

***«Вĕренӳ» наци проекчĕ Муркаш районĕнче пурнăçланса пынине шкулсен, ача сачĕсен, спортзалсен сăн-сăпачĕ улшăнни, хальхи вăхăтра Кашмашра çĕнĕ шкул хăпарни урлă лайăх курма пултаратпăр.***

Çак нацпроект шайĕнчех вĕренӳ организацийĕсенче юсав ĕçĕсем ирттерессине тата вĕсен территорийĕсене тирпей-илемпе хăт кĕртессине те пăхса хунă. **Кун пек пысăк калăпăшлă ĕçсене пирĕн республикăра 50 процент е ытларах кивелсе çитнĕ шкулсенче пурнăçлаççĕ.**

Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти В. Верендеев ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул та, кивелсе çитнĕ шкулсен шутĕнче пулнăскер, çакăн пек юсава кĕтсе илчĕ.

«Вĕренӳ организацийĕсене çĕнетессин проекчĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Ен вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствипе Муркаш район администрацийĕ килĕшӳ тунă. Килĕшӳре Вĕренӳ министерстви Чăваш Республикин бюджетĕнчен муниципалитет бюджетне субсиди куçарса парассине пăхса хунă. Çавна май 2021 çулта проектра пирĕн районти Мăн Сĕнтĕр шкулĕ хутшăнать. Ăна тĕпрен юсаса çĕнетме 30 млн та 17 пин те 527 тенкĕ уйăрса панă», – палăртрĕ Муркаш район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова. Ертӳçĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак суммăран 27 млн 916 пин те 300 тенкине республика бюджетĕнчен уйăрнă, ыттине вырăнти бюджетран хушса финанслаççĕ.

Мĕнле ĕçсем туса ирттерĕç-ха Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче? Юсав ĕçĕсен шутне шкул çуртне тытса тăракан тĕп конструкцисене тата уйрăм пӳлĕмсене тытса тăракан конструкцисене юсасси, шалти инженери тытăмне юсасси, шалти юсав ĕçĕсене туса ирттересси, çуртăн отмосткине тата çиелти шывсене юхтарса ямалли тытăма юсасси кĕрет.

Зоя Дипломатова çак ĕçсене тăвакан подряд организацине электрон аукцион иртерсе палăртнине каларĕ. Аукционра «Уютстрой» пĕрлешӳ çĕнтернĕ.

Юсаса çĕнетнĕ хыççăн объекта кăçал августăн 25-мĕшĕнче хута ямалла. Ĕçсем вара питĕ пысăк калăпăшлă. Çавăнпа та пĕрлешӳ строителĕсем ĕçе тытăннă та ĕнтĕ.

Строительство ĕçĕсем пыракан çуртра вара, паллах, шкул ачисем вĕренме пултараймаççĕ. Çавăнпа та унччен шкул администрацийĕ 1 – 4 классенче вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе тĕл пулса калаçнă. Çапла хальхи вăхăтра 1 – 4 тата 9 – 11 классем куçăмлă майпах шкулчченхи уйрăмăн тата Çамрăк техниксен станцийĕн филиалĕн пӳлĕмĕсенче вĕренеççĕ. Зоя Дипломатова çав пӳлĕмсем ачасене вĕренме юрăхлине, СанПиН требованийĕсене тивĕçтернине палăртрĕ.

Çав вăхăтрах ашшĕ-амăшĕ килĕшнипе асăннă классенчи ачасем вĕренӳре дистанци формине те усă курма пултараççĕ. Шкулти 5 – 8 классенче вĕренекенсем вара ку вĕренӳ çулне дистанци вĕренӳ формипе усă курса вĕренсе пĕтерĕç.

50 е ытларах процент таран кивелсе çитнĕ вĕренӳ организацийĕсене тĕпрен юсассине кăна мар, вĕсен территорийĕсене те тирпей-илем кĕртессине пăхса хунă терĕмĕр. Мăн Сĕнтĕр шкулĕн территорийĕнче те хăтлăх ĕçĕсем пулмалла. Территорине хăт кĕртмелли проектпа смета документацине туса хатĕрлеме тата ăна экспертиза витĕр кăларма вырăнти бюджетран укçа уйăрса панă.

Муркашри «Солнышко» ача садне те пĕлтĕр тĕплĕ юсав туса ирттерчĕç. Унăн территорине те хăт кĕртессипе тума палăртнă ĕçсен проектпа смета документацине туса хатĕрлеме тата документсене экспертиза витĕр кăларма район бюджетĕнчен укçа уйăрнă.

Кивелсе çитнĕ вĕренӳ организацийĕсен çурчĕсене тĕпрен юсама тата вĕсен территорийĕсене хăт кĕртессипе ирттекен конкурса 2022 çулта хутшăнма районти тăватă шкула палăртнă: Нискасси, Москакасси, Ярапайкасси тата Çатракасси вăтам шкулĕсем. Конкурса хутшăнма кирлĕ документсене хатĕрлеме вĕсене те район бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрса панă.

**«Вĕренӳ» наци проекчĕ шайĕнче пулса пыракан тепĕр пысăк ĕç – шкулсенче «Точка роста» центр уçни.** Вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх, кун пек центрсем кăçал харăсах тăватă шкулта тума палăртнă: Муркаш, Ярапайкасси, Чуманкасси тата Москакасси вăтам шкулĕсенче.

Çак шкулсенчи кулленхи юсав ĕçĕсене пурнăçлама укçа-тенке вырăнти бюджетран уйăраççĕ. «Точка роста» центрсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтересси тата унта ĕçлекен педагогсене ятарлă курссенче вĕрентесси республика тата федераци бюджечĕсенчен уйăрнă укçа-тенкĕпе пулса пырĕ.

Аса илтеретпĕр, виçĕмçул кун пек центрсем Йӳçкасси тата Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕсенче уçăлнăччĕ, пĕлтĕр – Калайкасси тата Çатракасси вăтам шкулĕсенче.

**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**